Патшалăх пулăшать

Ĕçлемен, начар пурăнакан пенсионерсене – укçан пулăшу

Патшалăх социаллă хӳтлĕхе тивĕçнисен пурнăçне çăмăллăхсем, хушма пулăшусем кĕртессипе курăмлă ĕçсем пурнăçлать, пысăк тимлĕх уйăрать. Ана эпир ача пособийĕсем ӳсninче, ытти пулăшусенче куратпăр. Раççей Федераци Правительстви 264 номерлĕ постановленийĕпе килĕшӳллĕн пĕччен пурăнакан, ĕçлемен пенсионерсене, чрезвычайлă лару-тăрăва пула инкеке лекнисене Пенси фончĕ урлă адреслă пулăшу пама пăхнă. Çавна май Чăваш Республикинче пурăнакансем валли 20 миллион тенкĕ укçа уйăрнă. Çав шутран 1 миллион та 79 тенкĕ Муркаш районĕнчи хӳтлĕхе тивĕçнисем валли.

Адреслă пулăшăва тивĕçме пултаракансен категорине тĕплĕнрех палăртса хăварам. Йывăр пурнăçлă, ĕçлемен,пĕччен пурăнакан, инвалида тухнă, ватлăхне пула хăйне хăй пăхайман, сахал тупăшлă пенсионерсем валли çак пулăшăва пама пăхнă. Çавăн пекех хаклă йышши эмелсем, реабилитаци оборудованийĕсем туяннă, тӳлевлĕ медицина сиплевĕ илнĕ, вутçулăма тата ытти синкере пула шар курнă пулсан пĕр хутчен адреслă пулăшу уйăрма пăхнă. Унсăр пуçне пенсионер виçĕ пин тенкĕрен хаклăрах йăлара усă курмалли прибор туянать пулсан, ăна çирĕплетекен тивĕçлĕ документсем тăратмалла.

Пулăшăва заявлени çырса панă тăрăх уйăраççĕ. Çавăнпа пĕрлех пурнăç шайне тĕрĕсленине çирĕплетекен акт (ăна заявлени çырса панă хыççăн пăхса тухаççĕ, пенси калăпăшне, çемье йышĕ, çемье членĕсен тупăшне тата 3 пин тенкĕрен пысăкрах тăкакаланине çирĕплетекен справка хатĕрлемелле. Çырнă заявленисене социаллă хӳтлĕх пайне тата Пенси фончĕн уйăмне килсе памалла.

Паянхи кун эпир çак ыйтăва татса парас тесе çине тăрсах ĕçлетпĕр. Ку енĕпе яваплă ĕçченсем ял тăрăхĕсене те тухаççĕ.

Е. АЛЕКСАНДРОВА,
РФ Пенси Фончĕн
Муркаш управленийĕн
ертӳçи.

Суд залĕнчен

Эсĕ кайран ӳкĕнмĕн-ши, анне! Анчах...

Анне пурнăçра чи хакли. Ачан пĕрремĕш сăмахĕ те çакăнтан пуçланать. Епле пысăк телей вăл анне ăшшине, тимлĕхне туйса ӳсни. Анчах та çак пысăк телее темшĕн-çке кашниех тивĕçеймест. Çапла вара аннесем чĕрĕ, сывă пулсан та ачасем вĕсемшĕн ытлашши пулса тăраççĕ. Çут тĕнчене телей курма килнĕскерĕн шăпа пӳрнипе ачалăхĕ те ĕмĕтре кăна юлать. Çавăн пек вара ача-пăчан тертленӳ пуçланать.

Акă Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Ойкас ялĕнче пурăнакан 26 çулхи Альбина Валентиновна Кудикова семьери пĕртен-пĕр ачишĕн те амăш туйăмне шеллет. Шупуç ялĕнче çуралса ӳснĕскер Ойкас ялĕнчи пĕр арçынпа пурăнать. 7 çулхи хĕрачан вара йĕркеллĕ пурăнма нимĕнле услови те çук. Хĕрарăмăн ăссăрла хăтланăвĕсем ача сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Çавăн пекех çамрăк хĕрарăм ача валли апатçимĕç, кĕпе-тумтир те кирлĕ тесе шутламасть. Пĕчĕклех чунĕ аманнă хĕр ача амăшне юратмасть, ку çеç те мар, унпа пĕр пӳртре пурăнма килĕшмест. Пурнăç çулĕнчен тайăнма ĕлкĕрнĕ хĕрарăм хăйĕн айăпне йышăнать. Унăн айăпне уголовнăй ĕçри кăтартусем те çирĕплетеççĕ. Çапла вара А.В. Кудиковăна тин çеç пурнăç çулĕ çине тăма пуçланăскерне Раççей Федерацийĕн УК 156 статьине пăснă тесе çирĕплетеççĕ. Çавна май ăна сакăр уйăх хушши ĕçлесе юсанмалла тата тупăшăн вунă процентне патшалăх шутне куçармалла турĕç.

Асатте-асаннесен çӳлĕсене аса илер-ха. Çемьере 5-6 ача ӳстернĕ, кунне-çĕрне пĕлмесĕр пурнăç çулĕ çине тăратассишĕн тăрăшнă. Хăйсем çиес çăкăр татăкне те ачасенех панă. Эрех-сăрапа ашкăнма мар, ун пирки шутлама вăхăчĕ те пулман. Е тата çемье тулашĕнчи çепĕçлĕхпе юрату авăрне лекнисем çине еплерех куçпа пăхнă пулĕччĕç-ши паян? Тем тесессĕн те эпир хамăр пурнăç кăстăрчăкĕ умне хамăрах йывăр чул тĕртсе хуратпăр. Анчах темшĕн-çке тĕрĕс çул-йĕр тăрăх утасси хăшĕ-пĕрин çав тери йывăррăн пулса пырать. Çапла çав, ӳкĕнӳ туйăмĕ пирĕн пата ытла та кая юлса çитет.

Е. ЕГОРОВ,
прокурора пулăшаканĕ.

Ялсенчи хыпарсем

Çул çинче – ачасем

Ачасем – пирĕн çутă пуласлăх. Чылай чухне вара вĕсен кун-çулĕшĕн тĕрлĕ инкек-синкек, пăтăрмах, хăрушлăх кăларса тăратать. Аслă çулхисен вара тĕп тĕллевĕ ачасене тĕрĕс воспитани парасси, усал-тĕселтен сыхланма вĕрентесси пулса тăрать. Çавăнпа та Отарккă ялĕнчи "Малыш" ача садĕнче ку енĕпе чылай ĕçсем туса ирттереççĕ, çулйĕр правилисене вĕрентеççĕ. Кунта вĕсене мĕн пĕчĕкренех светофор тĕсĕсене тата пĕлтерĕшĕсене вĕрентеççĕ. Шкула кайма хатĕрленекен ачасем вара çул-йĕр çинчи паллăсемпе паллашаççĕ, велосипедпа çӳреме хăнăхаççĕ. Педагогсем çамрăк ăру тарăн пĕлӳ илтĕр тесе мĕн пур условисене туса параççĕ. Кулленхи ĕçре калаçусемпе, сăнавсемпе тата ытти вĕрентӳ мелĕсемпе усă кураççĕ. Çавăн пекех кунта тĕрлĕ интереслĕ мероприятисем пулса иртеççĕ. Çаксене пурне те ачасем çул-йĕр правилисене тĕплĕнрех вĕренччĕр, тĕрлĕ инкек-синкеке ан лекчĕр тесе йĕркеленĕ.

Хамăр инф.

Юн паракансене пĕлме

Донор кунĕ пулать

Августăн 1-мĕшĕнче районти тĕп больницăра донор кунĕ пулать. Çавăнпа та пурне те кая юлмасăр пыма чĕнетпĕр. Юн паракансене хавхалантарма икĕ кун хушши ĕçрен хăтараççĕ (уннăн тӳлеççĕ) тата 80 тенкĕ укçан параççĕ.

Тав сăмахĕ

Пуç таятпăр сирĕн умăрта

Тойкилтĕ ялĕнчи Валентин Федорович Федорова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн тăвансене, ял-йыша, Тойкилтĕ шкул коллективне, Хорнуй ял тăрăхне, унăн вĕренекенĕсене чĕререн тав тăватпăр. Пирĕн хуйхăна пĕрле пайланăшăн сирĕн умăрта пуç таятпăр.

Мăшăрĕ, ывăлĕсем.

Продаем цемент, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид, лаки, краски, обои. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».
Тел.: 8-903-346-40-58. 3-5.

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СОЮЗ КРЕДИТНЫХ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИХ КООПЕРАТИВОВ ГРАЖДАН
ПРЕДОСТАВЛЯЕМ КРАТКОСРОЧНЫЕ
ЗАЙМЫ
ПРИНИМАЕМ НА ХРАНЕНИЕ
СБЕРЕЖЕНИЯ
14 - 30 % ГОДОВЫХ
Наше представительство в с. Моргауши
филиал КПКГ "Агрокредит":
ул. 50 лет Октября, д.23, тел. 2-18-13
Услуги предоставляются пайщикам кооператива

Продаю трехкомнатную квартиру в селе Большой Сундырь.
Тел.: 8-905-028-86-39.

Качака сутатăп. Йĕкĕреш путек тунăскер. Хакĕ каласса татăлнă тăрăх.
Тел.: (60165) - 8- 927- 844-06-20.

Пĕрремĕш хут пăрулана хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр.
Тел.: 2-21-26; 8-927-991-43-12.

Милици хроники

Кама е мĕне пула хирĕçетпĕр-ши?

Паянхи сенкер экран, цивилизаци ĕмĕрĕ пире ытла та этемлĕх картинчен кăларса ячĕ пулас. Тăтăшах хĕнени, вăрлани тата ытти пулăм пирки илтетпĕр, вулатпăр. Шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй çаçне 19 çулхи хĕр хăйĕнчен икĕ çул кĕçĕнреххине тапса, çапса хĕненĕ пирки пĕлтерчĕç. Çакăнтан тĕлĕнмелле пек те туйăнать. Ара хĕрсем çинчен урăхларах шутлас килет-çке.

Çӳлерех асăннă ĕç вара Тяпакасси ялĕнче июлĕн 17-мĕшĕнче 24 сехетре пулса иртнĕ. Икĕ хĕр хушшинче малтан хĕрӳ каласу, кайран çапăçу пуçланнă.Аслăраххи Москакасси ялĕнче пурăнаканскер, Тяпакссинчине ятарласа хĕнеме килнĕ тейĕн. Çапла вара асфальт çул çинчи пăтăрмах ырă патнех илсе çитереймен. Халĕ ĕнтĕ ку ĕç-пуç пирки РФ УК 116 ст. уголовнăй ĕç пуçарнă.

Акă тата тепĕр ăссăрла ĕçе пăхса тухар. Çĕньял Очăкасси ялĕнчи Учительсен урамĕнче пурăнакан 47 çулхи арçын пачах ăсран тайăлнă тейĕн. Çакскер арăмĕпе хирĕçӳ пуçарать. Те куçĕ умне асар-писер курăннă, те ăсран тайăлнă, аллине çĕçĕ тытнă. Ытла та хĕрсе кайнă арçын, куллен вĕри яшка хатĕрлесе çитерекен арăмне вĕлерессипе хăратнă. Паллах çавăн йышши пӳтсĕр каçару сăмахне те, арçын ятне те тивĕç мар. Халĕ вăл чунсăр этем пирки РФ УК 119 ст. уголовнăй ĕç пуçарнă.

Пичете шалти ĕçсен материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Молчание - золото.!

РУСЬ ПЕНСИОННЫЙ ФОНД

Для начала определимся, кого в последнее время называют "молчунами"? Всё чаще "молчунами" называют граждан, которые до сих пор не решили для себя вопрос, кому же следует доверить инвестирование своих пенсионных накоплений.

По официальным данным в нашей стране около 90% граждан активного возраста (от 40 лет и моложе) попали в разряд таких "молчунов".

В основном это молчание связано с элементарным отсутствием информации. Не раз нам приходилось сталкиваться с недоверием людей и слышать о том, что "пенсия - это еще так далеко".

К сожалению, управление Внешэкономбанком (ВЭБ) деньгами будущих пенсионеров не способствовало увеличению пенсионных накоплений граждан РФ. Начисленный инвестиционный доход на именные пенсионные счета не перекрыл даже уровень официальной инфляции. В результате средства будущих пенсионеров обесценились на 3,33%. Это заставило инициаторов пенсионной реформы задуматься над тем, как спасти пенсионную реформу и заставить "молчунов" заговорить.

По замыслу инициаторов пенсионной реформы именно накопительная часть пенсии должна значительно повлиять на величину пенсии нынешних молодых людей. Однако, вооружившись листком бумаги и калькулятором, мы можем сделать неутешительный вывод - инфляция "съедает" и без того не великие капиталы. А это значит, что чем раньше мы определимся в выборе негосударственного пенсионного фонда для управления накопительной частью трудовой пенсии, тем более достойный уровень жизни сможем обеспечить себе после выхода на пенсию. Так что, молчание в данном случае, вопреки пословице - не золото, а совсем наоборот. Тем более, когда цена вопроса - наша будущая пенсия.

Оказать Вам информационную поддержку и помочь сделать осознанный выбор - это и является основной задачей наших статей.

Отделение НПФ "Русь" г. Чебоксары: 428000, Республика Чувашия, г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 52/2, офис 101. Тел./ факс: (8352) 39-54-39. E-mail: pfruss@yandex.ru. www.pfrus.ru.

КОМПАНИЯ ГОДА 2006

НЕКОММЕРЧЕСКОЕ ПАРТНЕРСТВО НАЦИОНАЛЬНАЯ АССОЦИАЦИЯ НЕГОСУДАРСТВЕННЫХ ПЕНСИОННЫХ ФОНДОВ

Продаем банные печи разной формы, металл толстостенный. Обращаться: д. Сыбайкасы, ангар на территории автопарка. Тел.: 8-919-655-21-51.

ОАО «Моргаушский кирпичный завод» срочно примет на работу электромонтеров, машинистов экскаватора и рабочих (мужчин). Заработная плата от 10000 рублей. Тел. для справок: 2-13-47.

К/у проводит открытый аукцион на повышение цены по продаже имущественного комплекса СПК «Хлебороб». Торги состоятся 28 августа 2007 года в 12.00 по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Тренькино, здание конторы.
С порядком проведения торгов, условиями подачи заявок и внесения задатка можно ознакомиться по адресу: 603098, Н. Новгород, ул. Пушкина, 29-116. Тел.(8312) 439-53-82; 960-187-35-15.

8 августа 2007 года с 8 до 15 часов Ульяновская обувная фабрика в библиотеке с. Большой Сундырь проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах собственности, для животноводства из категории «земли населенных пунктов», расположенный на территории Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики:

№ п/п	Месторасположение земельного участка	Кадастровый номер участка	Целевое назначение	Площадь кв.м.
1.	Участок находится примерно в 50 м по направлению на юго-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, деревня Синьял-Оринино, улица Чебоксарская, дом №61.	21:17:10 02 01:0069	Для животноводства	2500

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ вăрçă ветеранĕ, пенсионер
Сергей Владимирович
ВЛАДИМИРОВ
вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта нумай çул хушши кĕçĕн классене вĕрентекен В.Н. Ипатьеван юратнă
АМАШĔ
нумай вăхăт хушши чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Заместитель гл. редактора
В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**
Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3410. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 27.07.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру МАКАРОВА Р.А.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.